# Вулавăша кĕвĕ çитрĕ

ЧР Наци библиотекине çитсен «Мерчен» музыка залĕнче хĕрӳ ĕç пынине асăрхарăм. Пай пуçлăхĕ Вера Архипова Виктор Ходяшев çуралнăранпа 95 çул çитнине паллă тума уяв программине хатĕрлетчĕ.

«Мерчене» Вера Архипова пуçарнипе кăçалхи пуш уйăхĕнче «Вулавăша кĕвĕ çитрĕ» презентаципе уçрĕç, çавăнтанпа вăхăт нумаях иртмерĕ пулин те ку таранччен унта чылай мероприяти йĕркелерĕç. Наци кĕнекисен «Кĕнеке урлă халăхсен килĕшĕвĕ патне» регионсен хушшинчи X фестиваль программипе килĕшӳллĕн ирттернĕ тĕл пулăва тĕрлĕ ӳсĕмри çынсем пухăннăччĕ. Вĕсем вулавăшра В.Мошковăн «Мелодии Волго-Камья», В.Воробьевăн «Чувашские народные песни» тата Е.Михайлов хатĕрленĕ «Старые Чебоксары: история, археология, топонимика» кĕнекесен презентацийĕсене курчĕç. Каярахпа «Музыка мĕн çинчен пĕлтерет?» калаçупа концерт каçĕ пулчĕ. Унта пынисем чăвашсен асамлă юрă-кĕвĕ тĕнчине лекрĕç, В.Ходяшев, О.Агакова, Т.Фандеев, А.Петров хайлавĕсене итлесе савăнчĕç. Халĕ те, вĕçленекен çулăн юлашки уйăхĕнче, музыкăпа поэзие, живописе пĕрлештерекен «Мерчен» залран çын татăлмасть.

**Людмила КУТЬИНА.**